Иван ТЕНЮШЕВ

СĂВАСКАР ПАТТĂРЁСЕМ

Пĕрремĕш вĕрентӳçе киреккам та пурнăç вĕçне çитичченех асра тытать. Патăрьел районĕнчи Алманчăра Пантелеймон Яковлевич Волков пĕрремĕшпе иккĕмĕш классенче вĕрентсе виççĕмĕшне çитернĕччĕ ĕнтĕ, анчах та вĕренӳ çулĕ пуçламăшĕнче мана хулран тытрĕ те тăваттăмĕшне илсе кайрĕ, унта вĕренме хушрĕ.

Каярахпа, чей ĕçсе ларнă хушăра, аттерен, колхоз счетоводĕнчен, ыйтрĕ: «Эсĕ Шупашкара çитсе курнă-и? Хула вăрттăнлăхне каласа парам-и?» Унăн халапĕ, вулавçă тусăм, сана та кăсăклантарĕ тетĕп.

Мĕн вăл Тăван çĕр-шыв? Чи малтанах çуралса ӳснĕ ял, хула. Тăван çĕр-шыв ăнлав йышлă туратлă, тарăн тымарлă йывăçа аса илтерет. Турачĕсем – ӳсекен, çитĕнекен ялĕсемпе хулисем. Вĕсем – çĕр-шывăн тĕп пуянлăхĕ.

Унăн çирĕп тымарсем те пур. Тымарсăр йывăç типет, хăрать. Çĕр-шывăн тымарĕсем вырăнĕнче – унăн харсăр çыннисем. Чысĕпе ирĕклĕхне паттăр ывăлĕсемпе хĕрĕсем хӳтĕлеççĕ. Туратсăр, тымарсăр йывăç пĕрене, кашта пулаймасть. Паттăр ывăлĕ-хĕрĕсĕр тăван çĕр-шыв сыхăлăха упраймасть.

Мĕн вăл тăван хула? Малтанах – Ярила урамĕ. Ярила – киреметçĕсен турри. Хулан авалхи пайне пăлхар-чăвашсем Ярила сăрчĕ ят панă. Вырăссем ăна Ярилина гора тенĕ. Ку ят хĕвел туррине пĕлтернĕ. Хула элтеперне Сăваса Ярила сăрчĕ урам уйрăмах килĕшет. Ку урам ыттисенчен малтан вăранать, пасар кĕшĕлтетме пуçлать. Тимĕрçĕ лаççи вĕркĕçне пашлаттарма, сунталне чанклаттарма тытăнать. Купсасем, атăçăсемпе çĕвĕçсем хăйсен яланхи ĕçне малалла тăсаççĕ. Лавккасен, лаçсен, паварсен алăкĕсемпе чӳречисем яриех уçăлаççĕ. Сăваскаркă, Сăкăт пуç тăрăхĕсенче пулăççем тетелĕсене караççĕ, атмисене ĕçе кĕртеççĕ.

Хĕвел анăç енче Сăваскаркă хĕрринче – эткер хулашĕ. Пĕрисем шӳтлесе каланă тăрăх, унта тĕкĕрçĕсем чăрсăр вăкăра мăйракинчен тата хӳринчен кăкарма хăнăхаççĕ.

Сăвас тăван хулине питĕ юратать, унăн илемĕпе пĕрмай йăпанать. Чăнах та ытармалла мар чаплă Сăваскар! Çырма тулли шыв юхать, авăрта çăрттан пулă сикет, çыран тăршшĕпех ешĕл курăк ӳсет. Ярила сăрчĕ, Чапăк сар урамĕсем уйрăмах хӳхĕм.

Сăвас, сăвар сăмахсем пĕлтерĕш енĕпе пăлхар халăхĕсен йăхĕсене палăртаççĕ. Ирĕке юратакан паттăрсене те çакнашкал ят панă пăлхарсем. Çырма хĕрринчи пысăк мар хула элтеперне те Сăвас ят вĕсем панă. Ун хулине Сăваскар, юхан шывне Сăваскаркă теме пуçланă. Йыт пулли, Сăкăт пуç, Йӳçлĕх /Трусиха/ çырмисен тăрăхĕнче пурăнакансене Сăвас хăйне пăхăнтарнă, вĕсен теперĕ пулса тăнă. Унăн малтанхи ячĕ – Чуар /чу-шыв, ар-çын/. Хăй йăхĕнчисене Сăвас паттăрĕ /Чăваш паттăрĕ/ ят ытларах килĕшнĕ. Сăваскар ят Шупашкара куçнă. Чу сăмах китай чĕлхинче те, Алтай халăхĕсен чĕлхинче те "шыв" пĕлтерĕшлĕ. Шыв паттăрĕ. Шупашкар – шыв пуçĕнчи хула. Пĕр енчен вăл Сăваскаркă хĕрринче, тепĕр енчен – Атăл çыранĕнче.

Вар – çырма.

Кар – хула.

Су, сă тĕрĕк чĕлхисенче шыв пĕлтерĕшлĕ.

Шывлă вар – шывлă çырма.

Кам вăл Сăвас? Пĕр те пĕр шутласан, ку сăмах йăх ятне пĕлтернĕ. Тепĕр тĕрлĕ тавçăрсан, пайăр ят пулнă – уйрăм çынна çапла чысланă. Элтепере ку ята Пăлхарçи ханĕ /патши/ панă, хăйне хӳтĕлеме хулкан парнеленĕ.

Сăвар хули ят хуриччен ăна урăхла чĕннĕ. Сăваскарсем ку ята ас тумаççĕ. Элтепер те элтепер теççĕ. Пĕрмаях çапла хисеплесе чĕнеççĕ. Сăвас сарлака кăкăрлă, тĕреклĕ çан-çурăмлă арçын. Вăл иртсе пынă чухне урам чĕтренет. Паттăр çын пулни пăхсах курăнать. Чăнчăн паттăр шуйттанран та хăрамасть теççĕ. Тăшмана аякранах курать имĕш. Çыннсене ăс вĕрентсе питех чăрманмасть, ырă тĕслĕх хăй кăтартать. Пĕррехинче Шенкерука çапла ăс пачĕ: ăссăрсен хушшинче нумай тытăнса ан тăр, ăслисен хушшинче вăхăтна ан шелле. Çавнашкал вĕрентни пĕтĕм Сăваскара сарăлчĕ.

Элтепер пулма çăмăл-и? Пытарар мар: хăй йăвинче пакша та патша. Хăй никĕсленĕ хулара элтепер те чăнчăн хуçа. Уйăх çути – çул çути, хĕвел çути – кун çути. Çак çутăсем элтепере иккĕшĕ те кирлĕ.

Санăн шăпу еплерех?
Элтепер юрри

Санăн шăпу еплерех?
Açу-аннӳ пӳрнĕ-и?
Пӳлĕхçĕмĕр пĕлет-и?

Телей килтĕр капланса,
Çурхи шыв пек сарăлса.
Телей пытăр ĕмĕре.

Çак пурнăçу еплерех?
Çил-тăманлă пулмĕ-ши?
Хурлăх килсе пусмĕ-ши?
Хуйху-суйху сирĕлтĕр
Кайăк хурсем вĕçнĕ пек,
Çурхи çил тамалнă пек.

Санăн тусу мĕнлерех?
Аслă Танкăр çырни-и?
Хăв суйласа илни-и?

Тусу сана савтăрах,
Савтăрах, юраттăрах.
Пĕрле пулăр ĕмĕрех.

Элтепер патне селĕм урхамахпа Элтер тĕкĕрçĕ вĕçтерсе çитет.

– Мĕн сĕвеппе килтĕн? – сăлтавне пĕлесшĕн пулать элтепер.

– Хыпар питĕ начар. Нухайсем Кериме вĕлерчĕç...

Пуян çырма тăрăхне хурахла çаратма нухай эшкерĕсем час-часах килеççĕ. Хулана вĕсем вĕçĕмсĕр хуйăх кăтартаççĕ.

Сăваскаркă хĕрринче тăнăç пурнăç вăраха пымасть. Çуллахи каç пекех кĕске çак вăхăт. Ăна вăраха тăсма хăватлă Танкăр та пулăшаймасть.

Элтепер хулан кăнтăр еннелле тинкерет. Шăв-шав çав енчен илтĕнет.

Сăвара сăваплă хула тесе шутласçĕ пăлхар-чăвашсем. Юхан шыв хĕрринчи тĕлĕнмелле илемлĕ вырăнта вырнаçнă çак хула. Çаранта çĕр çырли, кашни çупкам – ывăç тулли. Çав хуларан Сăваскара тарса килчĕç хĕрсем – Нарпи, йăмăкĕ Шенкерук, тантăшĕсем Ухинепе Укаç, Алсу.

Ука – ылтăн та кĕмĕл çипсемпе илемлетнĕ хăю. Укаç... Ку ята хĕр илемлĕ пит-куçлă, ырă кăмăллă пулнăран панă. Укапи – чĕкеç чĕлхеллĕ хĕр. Çав вĕçен кайăк пек чĕвĕлтетет.

Тĕп хула Сăвар монголсемпе кăпчаксен аллине çакланиччен Нарпи кунта самаях пысăк тимĕрçĕ лаççи хуçиччĕ. Кĕтмен çĕртен вилĕм хулара çулсăрах çӳрекен пулчĕ. Тăшман багадурĕ вăйламас Субедей юта юн тăкмасăр асаплантарать: çурăм шăммине шарт хуçать. Çак асапа кĕтсе тăмасть Нарпи. Йăмăкĕпе тата тантăшĕсемпе пĕрле урхамахсем утланаççĕ те Сăваскаркă хĕррине пырса тухаççĕ, Вăта хулара вырнаçаççĕ.

Нарпи кунта Сăвас элтеперпе паллашать. Иккĕшĕ пĕрремĕш утăмранах килĕштерчĕç пулĕ, пĕр ыйтупа кăна тавлашу вĕçне тухаймарĕç: шыв вăйлăрах-и е çулăмлă вут?

– Шыв çунан вута та пăхăнтарать. Шыв кăвартан вăйлăрах. Шыв пулмасан пурнăç çук... – ура тапсах ĕнентересшĕн Нарпи.

– Çук, пикеçĕм, эсĕ йăнăшатăн... Килĕшетĕп: шывăн хăват çук мар. Çапах вут-хĕм унран та вăйлăрах. Ахальтен мар ĕнтĕ Сăваскарта çулăм сирпĕтекен сăнăсем тутаратăн. Унта вут-çулăм хăвачĕ пысăк... – хăйĕннех çирĕплетрĕ Сăвас.

– Шывăн турат çук, вутăн алли çук. Шыв пуç пикин шупашка çук. Ай, Аслă Танкăр, ман хута кĕрсемччĕ: шыв хăватлине çирĕплетсемччĕ! – шӳтлереххĕн тархаслать турра Нарпи. – Мана тата акă мĕн иккĕлентермест: пăлхар-чăваш монголран та, кăпчакран та вăйлăрах, мĕншĕн тесен хăйĕн çĕр-шывĕнче çапăçать, ăна хӳтĕлет.

Нарпи – хӳхĕм хĕр. Сарă çӳçĕ кăлкан пек, хура куçĕ шăрçа пек. Сăнĕ-пичĕ вара кулса тăран хĕвел пек. Нар тени хăех хĕвеле пĕлтерет. Ун пек хĕр Сăваскар тăрăхĕнче тупата пĕрре кăна. Кирек хăш тум та килĕшет хĕре. Шурă шупăр тăхăнсан Нарпи шурă акăш пек курăнать. Куç умне хура сăхманпа тухсан – ытарайми чĕкеç тейĕн.

Нарпи пикене Сăвас элтепер пĕрремĕш хут тимĕрçĕ лаççинче тĕл пулать, пĕрре курсах юратма пуçлать. Сăвас та хĕре килĕшет.

Кăмăл-туйăмне пĕлтерме иккĕшĕ те хăяймаççĕ. Çапах пулла пĕрле çӳреме пуçлаççĕ. Шурă пулă тытма Атăл юхăмне те тухаççĕ. Тĕрлĕ йышши пулла чĕрĕ хальлĕн те, тĕтĕмлесе те, типĕтсе те Сăваскар пасарĕнче пĕрле сутаççĕ.

Мĕнех калăн, чипер хĕр Нарпи вĕçен кайăк пек вĕçесле çӳрет, каччине хĕпĕртӳллĕ чĕрепе кĕтет, янкăс сасăпа ялан пĕр юрă янăратать.

Икĕ çамрăкăн телей çулĕ урлă хура кушак каçса кайнăши, кайман-ши, хаваслă туй пулас çĕртен пулмалла мар пулса тухать.

Нарпи çапла юрлать:
Юрла, юрла теетĕр –
Юрă ăсти эпир мар.
Юрламашкăн тытăнсан
Ăстаран та кая мар.

Чунăм юрлать, чун юрлать,
Юрламасăр тӳсеймест.
Чĕрем сана кăмăллать,
Сансăр кăмăл çĕкленмест.

Савнă çыннăм, хаклă тус,
Кăлăхах пуçна ан ус.

Эс пуррипе эпĕ пур,
Эп пуррипе эсĕ пур.

Иккĕленме кирлĕ мар,
Пӳлĕх умĕнче калар:
Эсĕ савăнтаратăн,
Эсĕ юрлаттаратăн.

Маншăн эсĕ çут хĕвел.
Санăн таптăр ман чĕре.
Туслăх кайтăр ĕмĕре!
Çакă кирлĕ сар хĕре.

/Малалли пулать/.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче журналистсем хатĕрлессине пуçарса янă Иван Яковлевич Тенюшев профессор çак кунсенче 90 çул тултарчĕ.

Ватлăх ун валли мар темелле. Паян та пурнăçпа тан утать вĕрентекенĕмĕр. Вăл педагог çеç мар, пултаруллă çыравçă та. Калав-юмахне «Çыхман çапăшăпăр мар», «Юратусăр телей çук» кĕнекисенче кун çути кăтартнă. «Вĕсем виççĕн çеç юлчĕç» романĕ вулавçăсене уйрăмах кăсăклантарчĕ.

«Хыпар» Издательство çурчĕн ĕçченĕсем Иван Тенюшев профессора сумлă юбилейпа чун-чĕререн саламлаççĕ, çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, ăнăçу сунаççĕ.

Курав

ВАСНЕЦОВПА КОРОВИНА КИЛĔШНĔ ПУЛĔЧЧĔ

Чăваш патшалăх ӳнер музейĕнче иртнĕ эрне кун уçăлнă курав пирĕн чунсене уйрăмах çывăх. Мĕншĕн-ши? Эпир пурнăçа мĕнле курнă – çапла йышăннă. Нимĕн илемлетмесĕр, улăштармасăр.

Çĕнĕ курав хуçи – Пĕтĕм Раççейри "Вырăс художникĕсен союзĕ. Çĕнĕ вăхăт" пултарулăх пĕрлĕхĕ. Организаци çак ятпа çӳрени унта вырăс ӳнерçисем пулнине пĕлтермест, чи пĕлтерĕшли – вăл живописçре вырăс реализм шкулне тытса пыни. Асăнса хăвармаллах: 1903-1923 çулсенче Раççейре çак ятлă союз, реализм меслечĕпе усă кураканскерсене пĕтĕçтерекенни, пулнă. Унăн пуçаруçисем – А.Архипов, А.Васнецов, М.Врубель, К.Коровин, В.Переплетчиков тата ыттисем те.

2008 çулта союза çĕнĕрен чĕртсе тăратнă. Çак тапхăрта вăл Мускавра пилĕк курав тата Раççей хулисенче куçса çӳрекен виçĕ проект йĕркеленме ĕлкĕрнĕ. 2012 çулхи нарăс уйăхĕнче тата çĕнĕ проект, жанрлă картинăсене çыхăнтараканскер, пурнăçа кĕме пуçланă. Вăл çак хуласенче иртет: Брянск, Липецк, Воронеж, Тамбов, Пенза, Арзамас, Шупашкар, Чул хула, Йошкар-Ола, Гороховец, Плёс. Кураври картинăсене пурне те истори, хальхи пурнăç темипе ӳкернĕ.

Акă çав курав /ун коллекцийĕнче сюжетлă 100 произведени/ – Шупашкарта. Ăна савăнăçлă ларутăрура уçма ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов, союз председателĕ Юрий Герасимов, ЧР Художниксен союзĕн председателĕ Ревель Федоров, Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн директорĕ Геннадий Козлов хутшăнчĕç. Ун умĕн "Пĕрлехи истори 100 çулта" документлă фильм кăтартрĕç. Ăна Вырăс художникĕсен союзĕ йĕркеленнĕренпе 110 çул çитнĕ май "Культура" телеканал валли ятарласа ӳкернĕ.



Вадим Ефимов шухăшĕпе – асăннă выставка тĕп хула çыннисемпе унăн хăнисене кăсăклантаратех. Реализм майĕпе пурнăçланă произведенисем вырăс философине уçса панипе, куравçăсене хăйсен чун-чĕре илемĕпе, шухăш-кăмăлĕпе çывăх пулнипе илĕртеççĕ, шухăша яраççĕ.

Ревель Федоров вара союз çĕнĕрен вăй илнине ӳнер искусствин пысăк çитĕнĕвĕпе танлаштарчĕ.

Юрий Герасимов живописçри вырăс реализмĕн шкулĕ пилĕк ăрăва çыхăнтарнине палăртрĕ. "Шанатăп: союзăн 100 çул каяллахи йĕркелӳçисем пирĕн паянхи ĕçпе кăмăллă юлнă пулĕччĕç", – терĕ Юрий Дмитриевич.

■ **Надежда СМИРНОВА.**

● ***Курав ран.***

Автор сăн ӳкерчĕкĕсем



Ас тăвăм

ПОЭТА МАНМАÇÇĔ

1942 çулхи чӳк уйăхĕн 19-мĕшĕнче Хĕрлĕ çар Сталинград патĕнче хăватлă контрнаступлени пуçарнă. Вăл Паулюсăн 300 пинлĕ çарне унка çавăрса илсе аркатнипе вĕçленнĕ. Ку – Тăван çĕр-шыв вăрçи историйĕнчи чи пĕлтерĕшлĕ çапăçусенчен пĕри пулнă.

Çакăн хыççăн Гитлерла фашистсен çарĕ текех ураланайман, юлашкинчен тăватă çула тăсăлнă юнлă вăрçă Берлина парăнтарнипе вĕçленнĕ. Ахальтен мар Сталинграда хӳтĕленĕшĕн пынă çапăçу пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерсе каласпарнă.

Çĕнтерĕвĕн çухатăвçем те пысăк пулнă ĕнтĕ. Сталинграда хӳтĕлесе чăваш халăх ывăлĕ-хĕрĕ те пуç хунă. Çав шутрах пирĕн паллă виçĕ поэт – Владимир Бараев-Сĕркке, Максим Ястран, Илья Думилин.

Пĕлтĕрхи раштавăн 15-мĕшĕнче çитмĕл çул каялла пулса иртнĕ пулăма аса илсе Ульяновск обласĕнчи Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси ялĕнче Владимир Васильевич Бараев паттăр салтак поэта халалласа аса илӳ каçĕ иртрĕ. Хуйхăпа хутăш уява йĕркелекенĕсем поэтăн иккĕмĕш сыпăкри тăванĕсем, халĕ Çĕнĕ Ульяновскра ĕçлесе пурăнакан Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ артистки Зоя Михайловна Рейтер тата унăн аппăшĕ Роза Михайловна Куракина пулчĕç. Асăну каçне мĕншĕн Чăвашкассинче иттернĕ-ха? Чăвашкасси – Владимир Бараев-Сĕркке поэтăн иккĕмĕш тăван ялĕ. Унăн амăшĕ Шерпе çак ял хĕрĕ пулнă. Поэта пĕлекенсем аса илнĕ тăрăх – вăл куртан тухма пĕлмен, çывăх тăванĕсемпе юлташĕсем патне час-часах килсе çӳренĕ. Районта тăван чĕлхепе тухса тăнă «Пĕрлешӳллĕ ят» хаçатра та ĕçленĕ.

Асăну каçне поэтăн Виçпӳрт Шăмăршăри тăванĕсем те йышлăн пынăччĕ. Вăл Чăваш наци конгресĕн гимнне – «Асран кайми аки-сухине» – юрланипе уçалчĕ.

Зоя Михайловна Рейтер залта ларакансене поэтăн кун-çулĕпе тата пултарулăхĕпе тĕплĕн паллаштарчĕ. Кун хыççăн вăл сцена çине поэтăн çывăхран тата аякран килнĕ тăванĕсене чĕнсе кăларчĕ. Паллах, вĕсенчен чылайăшĕ, аслă вăрçă хыççăн çуралса ӳснĕскерсем, Владимир Васильевич çиннчен ашшĕ-амăшĕсем каласа панă тăрăх кăна пĕлнĕ ĕнтĕ, çавах унăн пултарулăх еткерне яланах çывăха хунă. Çавăнпа вĕсем чаплă тăванĕ çиннчен аса илнисене итлеме питĕ хумхануллă пулчĕ.

Роза Михайловна Куракина Владимир Бараевăн «Ывăлăма» сăввине вуланă чухне нумайăшĕн куçĕсем шывланчĕç.

Чăнлă районĕнче ĕçлесе пурăнакан чăваш поэчĕсем – Валентина Тараватпа эпĕ те сăмах каларăмăр.

Уяв Чăвашкассинчи халăх хорĕн концертĕпе вĕçленчĕ. Унта Чăвашкассинчи пуçламăш тата кӳршĕри Çĕнĕ Улхашри вăтам шкулта вĕренекен ачасем те хутшăнчĕç.

– Нумаях пулмасть Чĕмпĕрте иртнĕ ачапăча «Чăваш ачи, сассуна пар!» конкурса пирĕн шкултан çичĕ ача хутшăнчĕ, унта вĕсем пурте парнеллĕ вырăнсем йышăнчĕç», – терĕ ертсе пыракан.

Чăннипех те, чăваш ачисем сцена çине пукане пек хитре тумпа тухса ăста юрланипе ташланине курсан камăн чунĕ савăнмĕ-ха? Вĕсем çине пăхсан тӳрех: «Эппин, пирĕн пуласлăх пур», – тесе шухăшлатăн.

■ **Анатолий ЮМАН.**

Ульяновск обласĕ,
Чăнлă районĕ

Орест Александрович МАРКИЯНОВ

74 çула кайса 2013 çулхи кăрлач уйăхĕн 21-мĕшĕнче педагогика ăслăлăхĕсен докторĕ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн тава тивĕçлĕ профессорĕ, Педагогика ăслăлăхĕсемпе социаллă ăслăлăхсен академийĕн, Пĕтĕм тĕнчери педагогика вĕренĕвĕн академийĕн чăн членĕ Орест Александрович Маркиянов вилнĕ.



О.А.Маркиянов 1939 çулхи нарăсăн 11-мĕшĕнче Чăваш Республикинчи Йĕпреç районĕнчи Кĕлĕмкасси салинче çуралнă. Хусан патшалăх педагогика институтĕн физкультура факультетĕнчен /1961 ç./, Пĕтĕм Союзри физкультура ăслăлăх тĕпчев институтĕн аспирантуринчен /1975 ç./ вĕренсе тухнă. Шупашкарти 23-мĕш вăтам шкулта физвоспитани учителĕ /1961 ç./, «Динамо» спорт обществин инструкторĕ /1962 ç./, Мускав энергетика институтĕн Атăлçи филиалĕнче физкультура кафедрин преподавателĕ /1963-1967 ç.ç./, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче физкультурăпа спорт кафедрин преподавателĕ /1967 ç./, заведующийĕ /1977-2010 çç./ пулнă. 1994-2009 çулсенче О.А.Маркиянов – И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçлекенсен профкомĕн председателĕ.

1997 çулта «Çамрăк спортсменсен ăсталăхне йĕркелемелли ăмăрту мелĕ» темăпа доктор диссертацине хӳтĕленĕ. 200 ытла ăслăлăх ĕçĕн, çав шутра 6 монографипе 5 ăслăйăн авторĕ. Вăл ертсе пынипе 5 кандидат диссертацине хӳтĕленĕ.

О.А.Маркиянов – Чăваш Ен спортсменĕсен хушшинче ирĕклĕ кĕрешӳ енĕпе СССРăн пĕрремĕш спорт мастерĕ /1962/, РСФСР чемпионĕ /1967/, Чăваш Республикинче ирĕклĕ кĕрешӳ шкулне йĕркелекенсенчен пĕри. Вăл пуçарнипе И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче студентсен, преподавательсемпе сотрудниксен сывă пурнăç йĕркине аталантарас ĕçре физкультурăпа спорт пĕлтерĕшне ӳстермелли комплекслă программа ăнăçлă пурнăçланса пырать. Чăваш Енре 10 çул ытла О.А.Маркиянов призĕсене çĕнсе илессишĕн ирĕклĕ кĕрешӳ енĕпе çамрăксен турнирне ирттернĕ.

О.А.Маркиянова «Раççей аслă професси вĕренĕвĕн хисеплĕ ĕçченĕ», «Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» хисеплĕ ятсем панă. Нумай çул ăнăçлă ĕçленĕшĕн «Раççей Патшалăх спорт комитечĕ 80 çулта», «Раççей профсоюзĕсем 100 çулта», «Университета аталантарма тӳпе хывнăшăн» медальсемпе наградăланă.

Лайăх çыннăн, спортсменăн, ăсчахăн, педагогăн Орест Александрович Маркияновăн çутă сăнарĕ яланах пирĕн чĕресенче упранă.

И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн коллективĕ.

* * *

О.А.Маркияновпа кăрлач уйăхĕн 23-мĕшĕнче 10.30 сехетрен пуçласа 12.00 сехетчен И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн Спорт комплексĕнче çак адреспа сыв пуллашаççĕ: Университет урамĕ, 38-мĕш çурт.

КĔСКЕН

● ***Санкт-Петербург – Брест пуйăсри пĕр купере пассажир бриллиантпа илемлетнĕ хаклă йышши çĕррине манса хăварнă. 1,5 млн тенкĕ тăраканскере сĕтел çине Мурманскра пурăнакан 57 çулти çын хăварнă. Çĕрĕ çухалнине арçынБеларуçре çеç асăрханă, унта вăл арăмĕпе тĕл пулма пынă. Следовательсем уголовлă ĕç пуçарнă.***

● ***Америкăри пĕр хулара кушак вырăнти ачасене шкула ăсатать. Сейбл текен хура тĕслĕ чиперкке, Тамара Моррисонăн чĕр чунĕ, шкул çывăхĕнчи çул патне пырать. Вĕренекенсене вăл çул урлă каçма пулăшать. Кăнтăрла иртсенте кушак çав вырăнах пырса ларать.***

Факс: /8352/ 28-83-70.
E-mail:hypar2008@rambler.ru
реклама пĕлтерӳ
Тел.: 28-83-70.
316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ.

ПРОДАЮ

25.Гравмассу, керамблок, песок, торф. Доставка. Т. 89023277585.

48.Разнорабочие в Москву. З/п от 1300 руб. в день. Т. 374852.

Постоянно действующая комиссия по приватизации муниципального имущества Шумерлинского района сообщает об итогах открытого по составу и форме подачи предложений по цене аукциона по продаже имущества, прошедшего 28.12.2012:

Лот № 1 - нежилое здание общей площадью 132,9 кв.м., инвентарный номер Р23/10-1784, 1-этажное, находящееся по адресу: Чувашская Республика, Шумерлинский район, с. Нижняя Кумашка, ул. Луговая, д. 31 а, и земельный участок из земель населенных пунктов, занятый нежилым зданием и необходимый для его использования общей площадью 920 кв.м., кадастровым номером 21:23:080601:160. Цена сделки – за нежилое здание 54600,00 руб. (Пятьдесят четыре тысячи шестьсот руб. 00 коп), за земельный участок 45000,00 руб. (Сорок пять тысяч руб. 00 коп.). Покупатель Самарин Юрий Алексеевич.

Канашская районная администрация информирует население о предстоящем предоставлении земельного участка площадью 60000 кв. м. с кадастровым номером 21:11:010101:765, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Канашский район, с.пос. Ямашевское, земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:11:010101. Категория земель – земли сельскохозяйственного назначения. Разрешенное использование – для сельскохозяйственного производства.

Желающим приобрести вышеуказанный земельный участок обращаться с заявлением в каб. 30 администрации Канашского района по адресу: г. Канаш, ул. 30 лет Победы, 87, в течение 30 дней со дня опубликования, тел. 2-84-80.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ – ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔ, "ХЫПАР" ХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ
Раççей Федерацийĕн Пичет комитетĕнче 1996 çулхи раштавăн 19-мĕшĕнче 015525 №-пе регистраципленĕ.

"Хыпар" индексĕ – 54800,
"Хыпар"-шăмат кун" – 78353,
"Çамрăксен хаçачĕ" – 54804,
"Чăваш хĕрарăмĕ" – 11515,
"Сывлăх" – 11524,
"Кил-сурт, хушма хуçалăх" – 54806.

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ

Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ

РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ/
Т.В.ИЛЬИНА /яваплă секретарь/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
А.Х.ЛУКИЯНОВА, Н.Г.СМИРНОВА

Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

ТЕЛЕФОНСЕМ

Адрес: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "ХЫПАР".

Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçне политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
/8-835-51/ 2-12-90 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Çĕр кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
pop408@rambler.ru
hypar@chtts.ru
hypar2008@rambler.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ компьютер центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» ПУП типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çиннчен" федераци саккунĕн 2 ст. кипĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.

Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.

Тираж 7939. Заказ 184.